# ЖУРНАЛИСТИКА - ТЕ́ПЧЕВ ПУÇЛАМĂШĔ

*Чăваш патшалăх университечĕн студенчĕсемпе калаçни*

Студентсем. Михаил Николаевич, сирĕн пултарулăх çулĕ журналисткăпа çыхăннă-и?

М.Юхма. Паллах çыхăннă. Патăрьелĕнчи вăтам шкулта вĕреннĕ чухнех районта тухса тăракан "Авангард" хаçат валли нумай çыраттăм, тĕрлĕ рейдсене хутшăнаттăм, юнашар ялсене те тухса кĕреттĕм, пире темиçе çамрăка "хаçатăн штатра тăман корреспонденчĕ" тесе хут панăччĕ. Шупашкарти пединститута вĕренме килсен вара "Çамрăк коммунистăн" штатра тăман корреспонденчĕ пулса ĕçлерĕм. Анчах кайран ăна хупса хучĕç. Ку вăл пирĕн пек çамрăк çыравçăсемшĕн чăн-чăн трагеди пулчĕ. Куратпăр ĕнтĕ, паян куна çитсе те чăваш çамрăкĕсен хаçачĕ çук. 1991 çулта эпир чăваш çамрăкĕсем валли "Вучах" çумĕнче 4 страницăллă хаçат кăларса тăтăмăр. Анчах кайран кăларма укçа-тенкĕ

тупаймарăмăр. Патшалăх та, çамрăксен организацийĕсем те пĕр пуспа та пулăшмарĕç.

ЧОКЦа 1989 çулхи декабрь уйăхĕнче йĕркеленĕ. Программăрах эпир пĕтĕм чăвашсем валли "Вучах" хаçат кăлармаллине çырса хăварнăччĕ. Вăл 1991 çултанпа тухма тытăнчĕ. Малтанласа унăн тĕп редакторĕ И.Я.Тенюшев пулчĕ. Çул çултан вара ЧОКЦ правленийĕ çине, тăрсах ыйтнипе "Вучахăн" тĕп редакторĕн ĕçне эпĕ туса пыма тытăнтăм.

Студентсем. Чи малтанах эсир ăçта пичетленме тытăннă?

М.Юхма. Чи малтанхи хайлавсем - сăвăсем, Патăрьел районĕнче тухса тăракан "Авангард" хаçатра пичетленнĕ. Эпĕ ун чухне Сăкăтри тулли мар шкулта, 3-мĕш класра вĕреннĕ. Каярахпа, редакци сĕннипе, информацисем, тĕрленчĕксем, очерксем çырма тытăнтăм. Республикăри тухса тăракан хаçат-журналра 1954 çултанпа пичетленетĕп. Чи малтанхи пallăрах хайлав - А.Кăлканăн "Эсĕ пысăк ĕнтĕ" кĕнеки пирки çырнă рецензи. Вăл "Ялав" журналра пичетленчĕ.

Студентсем. Журналистика ĕçĕ сире пултарулăх ĕçĕнче пулăшать-и?

М.Юхма. Питĕ пулăшать. Эпĕ мĕн пĕчĕкрен тăван халăх историне, хамăрăн чаплă çынсене тĕпчес тесе çунаттăм. Çак тĕлĕшрен мана журналистикăра ĕçлени питĕ пулăшрĕ. Акă, пирĕн вĕренӳ кĕнекисенче Иван Смирнов пулеметчик сăнӳкерчĕкĕ пичетленет. Ăна эпĕ 1956 çулта шыраса тупса пĕрремĕш хут "Çамрăк коммунист" хаçатра пичетлерĕм те оригиналне Чăваш краеведени музейне парнелерĕм. Е тата Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ Зосим Иванов сăнӳкерчĕкне те "Зосимпа унăн юлташĕсем" историлле очерк çырса пичетлерĕм. Халĕ пур çĕрте те çак ӳкерчĕке усă кураççĕ. Гена Якимов çинчен документсем те, ун ӳкерчĕкне те журналист пулса шыраса тупрăм. Ыттисем вара ман çулпа çеç кайнă. Чăвашсен чи малтанхи летчикĕ шутланакан Скворцова та эпир пĕр ватă Мочалов текен краеведпа пĕрле шыраса тупрăмăр.

Журналист çул-йĕрех мана чăвашсен ячĕпе çыхăннă тĕрлĕ çĕрсене тата чăвашсем халь пурăнакан вырăнсене илеиле çитеретчĕ. Акă, вăрçă хыççăнхи ламсемщĕн пĕрремĕш хут эпĕ Тюмень облаçĕнчи чапа тухнă "Канаш" колхоз çинчен çырса кăтартрăм, Тобольскран инçе мар Иртыш шывĕ

хĕрринчи "чăваш" ятпа çыхăннă вырăнсене çитсе килтĕм вĕсем çинчен те историлле очерксем çыртăм. Каярахпа Томск, Омск, Иркутск облаçĕсенчи, Красноярск крайĕнчи чăвашсем çинчен те çыртăм.

Хамăр республикăри чылай историлле пулăмсем çинчен те тĕрлĕ хайлавсем çыртăм. Вăл шутра Чаппан вăрçи (1921 çулхи пăлхав), Крепков, Космовский, Пучков çинчен те. Тĕрĕссипе каласан, çамрăк чухне хамăр Чăвашстанра çитсе курман кĕтес те хăварман. Кашни çулçÿрев хыççăн вара кĕске-кĕске тĕрленчĕксенчен тăракан очерксен ярăмĕ çыраттăм. Вĕсен жанрне "Çулçырав" тесе палăртаттăм.... Çак йăлана паян кунччененех тытса пыратăп. Акă, 1971 çулхине Пенза облаçĕнчи чăвашсем патĕнче пултăм. "Илем шывĕ хĕрринче" ятлă историлле очерк çыртăм. Тĕрĕссипе каласан, çав çулçырав мана "Вилĕмсĕрлĕх" ятлă тетралоги çырас çул çине илсе тухрĕ. Унта тăватă историлле роман - "Эткер", "Термен", "Анне çăкăрĕ", "Атте пăхчи". Журналист пулса çÿрени, паллах, ху ÿркенместĕн пулсан, писатель ĕçĕнче питĕ пулăшать.

Студентсем. Эсир хăвăр произведнийĕрсенче журналист сăнарне çырса кăтартни пулнă-и?

М.Юхма. Журналист сăнарĕ манăн темиçе хайлавра та калăпланнă. Вĕсенчен чи паллăраххи "Виççĕмĕш симфони" повесть. Вăл чăваш литературинчи культ тапхăрĕнчи чăваш халăхĕн чи маттур ывăл-хĕрĕсен хура элчелне çырса кăтартнă чи малтанхи хайлав. "Ялав" журналра, виçĕ номерте пичетленчĕ. Ку вăл Н.Хрущев вăхăтĕнчи самана çемçелнĕ (оттепель) вăхăтĕнче пулчĕ. Çав вăхăтра питĕ нумай инкек курнă Н.Мранькка çав повеçе питĕ кăмăллатчĕ. Уйрăм кĕнекен кăларма тесе, повесть валли умсăмах та çырнăччĕ. Анчах "Виççĕмĕш симфони" уйрăм кĕнекен пичетленеймерĕ, ăна чарса лартрĕç. Самана çемçелни ун чухне питĕ час пĕтрĕ... Çав повеçе каласа кăтартаканĕ - журналист.

Студентсем. Журналист пулса çырнă материалсем сире каярахпа илемлĕ литература хайлавĕсем çырма пулăшнă-и? Мĕнле тĕслĕхсем илсе кăтартма пултаратăр?

М.Юхма. Эпĕ хаçат-журналта пичетленĕ материалсенчен каярахпа илемлĕ литература хайлавĕсем пĕрре кăна çуралман. Ку тĕлĕшрен вара чи-чи классикăлла тĕслĕх, акă, çак пулса тăрать. Ун чухне эпĕ Шупашкарти 6-мĕш

шкулта ĕçлеттĕм. Пушă чухне тĕпчев ĕçĕпе тăрмашаттăм. Пĕррехинче архивра Гена Якимов комсомолеца вĕлерни çинчен вуларăм. Çак чăнлав мана питĕ тарăн шухăша ячĕ. Эпĕ вара вăл çуралса ÿснĕ яла тухса кайрăм та "Çырса пĕтереймен лозунг" ятлă историлле пысăк очерк хайларăм. Каярахпа Гена Якимов ĕçĕпе пурнăçне тата та тĕплĕнрех тĕпчесе "Палăк" ятлă повесть çыртăм. Вăл -яшлăхри шухăш-кăмăлпа çырнă хайлав. Тата каярахпа, çитĕнсе çитнĕ писатель пулсан, çав 20-30 çулсем çинчен тата тĕплĕнрех çырса кăтартас килчĕ манăн. Вара эпĕ хамăн мĕнпур тĕпчеве пĕтĕмлетсе "Шуракăш тĕкĕ" ятлă пысăк повесть çыртăм. Тата та каярахпа кĕтмен çĕртенех "Трактор килнĕ кунхи пăшал сасси" халăх драми çуралчĕ. Çак хайлавсене çуратма вăрлăх сапаканни "Çырса пĕтереймен лозунг" пулнине паян кун çирĕплетсех калатăп.

Кун евĕр тĕслĕхсем ман пурнăçра нумай пулчĕç. Акă, "Пурнăç сакки..." романа паян куна çитсе те ниçта та, ниепле те пичетлейместĕп. Вăл Шупашкарти тракторçăсем çинчен. Çак романа çырма вăрлăх акаканĕсем - маларах хайланă очерксем.

Студентсем. Сирĕн журналист пулса çырнă хайлавăрсене хаçат-журналра пăсса е кĕскетсе кăларман-и? Эпир, акă, çыратпăр та, хаçат-журналсенче пирĕн хайлавсене тем тĕрлĕ пăсса пĕтереççĕ. Вĕсене хирĕç кĕрешмелле-и?

М.Юхма. Ку вăл питĕ хăйне евĕрлĕ ыйту. Мĕнле писательшĕн мĕнле... Пысăк пуçлăхра ларакан çыравçăсем хăйсен ниме юрăхсăр çĕрĕк шывлă япалисене те пĕр кĕскетмесĕрех хаçат-журналра пичетлеччĕç. Эпĕ хам нихăçан та пысăк пуçлăхра ларман та, çавăнпа хаçат-журналра ĕçлекен пули-пулми çынсемех ман япаласене тем тĕрлĕ кĕскететчĕç, пăсатчĕç. Алă сулаттăм вара, ăçтан пуринпе те çапăçан тесе... Анчах уйрăм кĕнекен кăларнă чухне эпĕ хам хайлаври пĕр сăмаха та, запятойне те улăштарма е пăсма ирĕк паман. Кунта вара эпĕ питĕ хытă тăраттăм.

Мускавра е ытти çĕрти вырăсла тухакан хаçат-журналра эпĕ çырнă очерксемпе публицистикăлла статьясене, сулçыравсене нихăçан та пăсман, пĕр сăмах та кĕскетни е улăштарни пулман. Мускав хаçат-журналĕсенче ĕçлекенсен культура пысăк пулнă, çавăнпа, калăпăр, "Правда" хаçатра тухнă очерк кĕнекере те хаçатри пекех... "Ялав" журналра пичетленнĕ очеркпа кĕнекере çапăннă çав очерк хушшин-

че вара уйрăмлăхĕ пысăк пулма пултарать. "Ялавра" пăсса пичетлетчĕç, кĕнекере - хам çырнă пек. Мĕн тăвас тен, самани ун чухне çавăн пек пулнă...

Студентсем. Сирĕн публицистикăлла пултарулăх çинчен тишкерӳ тавраш̆ĕ пулнă-и?

М.Юхма. Ман публицистикăри пултарулăх çинчен Шупашкарти вăрçса-ятлаçса е националист, е совет халăхĕн тăшманĕ тесе каланисĕр пуçне йĕркеллĕ тишкĕрӳ пулман. Мускав хаçат-журналĕсенче те, чикĕ леш енче те пулнă. Калăпăр, "Дружба народов", "Октябрь" журналсенче, "Сельская жизнь" хаçатра. Парижра тухса тăракан "Турчика" журналра, "Болгаро-советская дружба" журналра тата ытти те.

Студентсем. Эсир хăвăр хаçат-журналра пичетленнĕ хайлавсене пурне те астăватăр-и? Вĕсене урăх псевдонимсемпе те пичетленĕ-и?

М.Юхма. Хаçат-журналра пичетленнĕ хайлавсене асăнса тухма питĕ нумай вăхăт кирлĕ. Вĕсен шучĕ темиçе пинрен те иртет. Пĕтĕмпех çырса тухма питĕ тимлĕ тĕпчемелле. Эпĕ Юхма Мишши тенисĕр пуçне М.Ильин, М.Семенов, И.Марков, М.Иванов, И.Иванов тата ытти хушаматсемпе те нумай хайлав пичетленĕ. Хам çырнă япаласене май çитнĕ таран пуçтарса çĕлесе пынă.

Студентсем. Чăваш публицистикин хрестоматине йĕркелес пулсан, эсир унта хăвăрăн мĕнле хайлавсене кĕртнĕ пулăттăр?

М.Юхма. Чăваш публицистикин хрестоматине йĕркелес пулсан, эпĕ унта хам çырнă çак хайлавсене сĕннĕ пулăттăм:

Вырăсла: Земля крылатых ("Правда"), Горсть земли ("Сельская жизнь"), Золотое руно традиций ("Дружба народов"), Брошенно поле ("Лит.газета"), Тяжелы вчерашние вериги ("Советская культура"), Свято верю в обнов ление ("Книжное обозрение").

Чăвашла: Çырса пĕтермен лозунг ("Çамрăк коммунист"), Илем шывĕ хĕрринче ("Çилçунат"), Акпарсла унăн юташ̆ĕсем ("Тăван Атăл"), "Константинопольри чăвашсем" кĕнекене кам çырнă ("Ялав"), Шурă чечек ("Вучах"), Саркайăк юрри ("Вучах"), Митта Ваçлей кĕперĕ ("Вучах"), Чĕнтĕрлĕ кĕпер (А.Талвир çинчен), Есмел çинчи ăшă çумăр (Альберт Канаш çинчен).

*1993.*